24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 апрелӗн 15 вырсарникун 72(6823) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Колхозсен чи пысӑк задачи

Хамӑр хаҫатӑн иртнӗ номерӗсенче эпир СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «Колхозсемпе совхозсенче вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатмалли 1945 ҫулхи план ҫинчен» йышӑннӑ постановление пичетлесе кӑлартӑмӑр.

Хӑйсен ҫак постановленийӗнче СССР Совнаркомӗпе партин Центральнӑй Комитечӗ вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ иртнӗ ҫулта пирӗн республикӑра начар пулса пынине кӑтартса панӑ.

Республикӑри партипе совет тата ҫӗрӗҫ органӗсем колхозсенче лашасене сыхласа усрас тата вӗсен хисепне ӳстерес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлессӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, ялхуҫалӑхӗнче машинӑсемпе лашасен хисепӗ сахаланнӑ пирки кашни лашапах нумайрах ӗҫ тумалла пулнӑ вӑхӑтра, партипе совет тата ҫӗрӗҫ органӗсен, колхоз председателӗсемпе колхозниксен лашасене пӑхса усрассишӗн тата вӗсемпе тӗрӗс усӑ курассишӗн нихӑҫанхи пек мар тимлӗн тӑрӑшмалла.

Анчах та нумай районсен руководителӗсем, ҫӗрӗҫ работникӗсемпе специалистсем юлашки вӑхӑтра лашасемшӗн тӑрӑшассине сӳрӗклетрӗҫ, иртнӗ ҫулсенче пулнӑ йӑнӑшсене кӑсал та тӳрлетмессӗ, лашасене пурне те сыхласа усрас тесе, кирлӗ ӗҫсене тумассӗ. Кӑҫал вылӑх-чӗрлӗх усрама условисем лайӑхрах пулнӑ пулин те, чылай районсенче халӗ те лашасен вилессӗ. Кӑҫалхи виҫӗ уйӑх хушшинче кӑна Кувакино районӗнче лашасен пӗтӗм хисепӗнчен 6,7 проценчӗ, Улатӑр районӗнче 5 процент, Первомайски районра 3,4 процент, Пӑрачкав районӗнче 3,6 процент, Шӑмӑршӑ районӗнче 3,7 процент вилсе пӗтнӗ.

Январӗн 1-мӗшӗпе апрелӗн 1-мӗшӗ хушшинче Елчӗк районӗнчи колхозсенче 97 лаша, Вӑрнар районӗнчи колхозсенче 42 лаша, Хӗрлӗ Чутай районӗнче 68 лаша, Октябрьски районра 42 лаша вилнӗ. ВКП(б) Обкомӗпе Чӑваш АССР Совнаркомӗ пӗр хутчен кӑна мар асӑрхаттарнӑ пулин те, ҫак районсенче лашасене сыхласа усрас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ ӗҫсем тумассӗ. Чылай районсенче ӗҫ лашисене ялавлӑха конюхсене ҫирӗплетсе паман, лашасемпе усӑ курас ӗҫре обезличка тата ответсӑрлӑх пуҫ пулса тӑрать. Ҫапла пулин те районсен руководителӗсем нумайӗшӗ, обезличка сиенӗ ҫинчен калаҫнисӗр пуҫне, нимӗнле чӑн-чӑн ӗҫсем те тумассӗ.

Шупашкар, Хӗрлӗ Чутай, Ишлей, Пӑрачкав, Елчӗк, Тӑвай, Чкаловски тата ытти хӑшпӗр районсенче конюхсене ӗҫкунӗ ҫырса памалли инструкцие пӑсассӗ: пур конюхсене те ӗҫкунӗ пӗр пек ҫырса парассӗ. Ҫавна пула конюхсем лашасене сыхласа усрас тата вӗсене мӑнтӑр тытас тесе интересленмессӗ. Ишлей районӗнчи «Клевер» колхозра счетовод, председательпе килӗшмесӗрех, кашни уйӑх вӗсӗнчех конюхсене 40-шер ӗҫкунӗ ҫырса парать. Кунта лашасем мӗнлине тата вӗсене хӑш конюх мӗнле пӑхнине шута илмессӗ. Ҫакӑн пек ҫӗрте лашасем мӑнтӑр пуласси кӗтме пулать-и-ха? Ҫак сиенлӗ йӑлана пур колхозсенче те халех пӗтерес пулать. Вӑл йӑла лашасем ӗрчетес ӗҫе пысӑк сиен кӳрет.

Партипе правительство лаша ӗрчетесси ҫинчен йышӑннӑ решени мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине партипе комсомол организацийӗсен тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑрас пулать. Лашасене сыхласа усрас тата вӗсен йышне ӳстерсе пырас ӗҫре колхоз руководителӗсемпе колхозниксен ответлӑхне ҫӗклемелле. Ҫакна тӑвас тесен, чи малтан, лашасемпе усӑ курас ӗҫри обезличкӑна сӑмахпа мар, чӑннипех пӗтермелле, кашни ӗҫ лашине ялан ӗҫлекен ездовойсем ҫумне ҫирӗплетсе памалла, конюхсене ӗҫкунӗсем ҫырса панӑ чухне вӗсен лашисем мӗнлине шута илмелле, лашасене лайӑх пӑхакан конюхсене ӗҫкунӗсем хушса парса хавхалантармалла.

СССР Совнаркомӗпе ПК ВКП(б) сӗннӗ тӑрӑх, 15 лашаран ытларах тытакан колхозсенче лашасем ӗрчетес ӗҫӗн заведующийӗсем пулмалла. Ҫак заведующисен конюхсене, ездовойсене суйласа илсе лартмалла, ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсене колхоз правленийӗнче ҫирӗплетмелле. Лашасем ӗрчетес ӗҫӗн заведующийӗсен лашасемпе ӗҫре тӗрӗс усӑ курнине тата вӗсене мӗнле сыхласа усранине сӑнаса тӑмалла. Кӗсресене чуптарас, ҫамрӑк тихасене пӑхса ӳстерес, лашасене таканлас тата вӗсене валли ут таврашсемпе транспорт инвентарӗсем хатӗрлес ӗҫе организацилесе ертсе пымалла. Колхозсенче лашасем ӗрчетес ӗҫӗн заведующийӗсем пулса ӗҫлеме опытлӑ тата ҫав ӗҫе юрататакан колхозниксене уйӑрса лартас пулать. Вӗсене хӑйсен обязанноҫӗсем ҫинчен ӑнлантарса памалла тата кашни колхозрах лаша ӗрчетес ӗҫе лайӑхлатма пулӑшмалла.

Уйхир ӗҫӗсем пуҫланиччен юлнӑ вӑхӑтра лашасене ҫураки валли лайӑх хатӗрлес тӗлӗшпе пур ӗҫсене те тумалла. Хӑшпӗр колхозсем халӗ те лашасене кӳлсе тӗрлӗ ҫӗре кайса ҫӳреме пӑрахмассӗ-ха. Ҫак ҫитменлӗхе халех пӗтерес пулать, пур лашасене те канма тата лайӑх апат ҫине тӑратас пулать, чирлӗ лашасене сыватас тӗлӗшпе, хаша кӑрчанкине пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла.

Ҫураки вӑхӑтӗнче ӗне вылӑхсене кӳлсе ӗҫлеме вӗрентессишӗн тимлӗн тӑрӑшмалла. Унсӑрӑн чылай колхозсене ака вӑхӑтӗнче йывӑр килме пултарать, вӗсем ҫуракине вӑраха яма тата ҫавна пула начар тыррпул туса илме пултарассӗ. Ҫакӑн пек тӗслӗхсем иртнӗ ҫулта сахал мар пулчӗҫ.

Вылӑх-чӗрлӗхсен йышне ӳстерес ӗҫре ама вылӑхсем нумайӗшӗ хӗсӗр пулни пысӑк чӑрмав кӳрет. Кунсӑр пуҫне, колхозсем вылӑх-чӗрлӗхе кирлӗ пек пӑхса усраман тата кирлӗ пек тӑрантарман пирки те чылай вылӑх-чӗрлӗх сухатассӗ. 1944 ҫулта пирӗн колхозсенче вылӑх-чӗрлӗхсем нумай вилнӗ. Анчах кӑҫал та вылӑх-чӗрлӗхсем вилесси пӗтмест-ха. Январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа Калинино районӗнче мӗнпур ӗне вылӑхсенчен 1,3 проценчӗ, сыснасем 4,9 процент, сысна ҫурисем 12,1 процент, сурӑхсем 2 процент тата путексем 1,5 процент вилсе пӗтнӗ. Ҫавӑн пекех Сӗрпӳ, Октябрьски, Шупашкар, Сӗнтӗр, Елчӗк тата ытти хӑшпӗр районсенчи колхозсенче те вылӑх-чӗрлӗхсем нумай вилсе пӗтнӗ. Ҫак районсенче вылӑх апачӗ ытти районсенчинчен сахалтарах-и мӗн вара? Ӗҫ кунта вылӑх апачӗ ҫитменнинче мар. Республикӑри партипе совет тата ҫӗрӗҫ органӗсем чылайӗшӗ вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлеме пӑрахрӗҫ, колхозсенче вӑл ӗҫ мӗнле пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмассӗ. Вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫине ҫакӑн пек сӳрӗккӗн пӑхма пӑрахас пулать.

СССР Совнаркомӗпе ПК ВКП(б) ҫапла шутлассӗ: партипе совет тата ҫӗрӗҫ органӗсен вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри 1945 ҫулхи тӗп задачи вӑл—колхозсенчи вылӑх-чӗрлӗх йышне малалла ӳстересси, вӗсен тухӑҫлӑхне хӑпартасси, ама вылӑхсем хӗсӗр пулнине пӗтерессии, вылӑх-чӗрлӗхе лайӑх сыхласа усрасси, вылӑх апачӗн хисепне малалла ӳстересси тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатасси пулса тӑрать. Пирӗн республикӑри пур районсен те кӑҫал вылӑх ӗрчетес тӗлӗшпе панӑ заданисене тултарма кӑна мар, ирттерсе те тултарма ҫителӗклӗ майсем пур. Ҫамрӑк вылӑхсене пурне те сыхласа хӑварни, вылӑхсене вӑхӑтра чуптарса хӑварни, ҫапла вара кашни ама вылӑхранах ҫамрӑк вылӑх илме тӑрӑшни кирлӗ.

Вылӑх-чӗрлӗхе ӑнаҫлӑн хӗл каҫарни вылӑхсен хисепне ӳстерес тата вӗсене ӗрчетмелли плана тултарас ӗҫре татӑклӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Райисполкомсемпе парти райкомӗсен тата зооветработниксен пур колхозсемпе совхозсенче те вылӑх-чӗрлӗхе мӗнле хӗл каҫарнине халех тӗрӗслесе тухмалла, палӑрнӑ ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла. Вылӑх-чӗрлӗхе кӗтӗве кӑлариччен вӗсене тӗрлӗ чир-чӗртен сыхлас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ ӗҫсем туса ирттермелле.

Вылӑхсем валли ҫуртйӗр вӑхӑтра юсаса хатӗрлес пулать. Июнӗн 1-мӗшӗччен кашни колхозрах вылӑх-чӗрлӗх валли ҫуртйӗрсем ҫителӗклипе ҫителӗклӗ маррине тӗрӗслесе тухмалла. Вылӑх ҫуртйӗрне юсас тата ҫӗнӗрен тӑвас ӗҫе халех пуҫӑнмалла. Ҫуракине ирттернӗ вӑхӑтра вылӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрлесси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла, мӗншӗн тесен ҫителӗклӗ апат хатӗрлемесӗр вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе ӑнаҫлӑн туса пыма ҫук. Нумай ҫул ӳсекен курӑксем, викӑпа сӗлӗ, тымарҫимӗҫсем, силос тумалли культурӑсем, ҫӗрулми лартса хӑвармалли плансене пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртмелле.

Ҫак тӗлӗшпе фермӑсем ҫумӗнчи участоксем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрассӗ. Вылӑх валли сӗткенлӗ апатсем ҫителӗклӗ хатӗрлес тесе, кӑҫал фермӑсем ҫумӗнчи участоксенче ҫӗрулми, тымарҫимӗҫсем, кавӑн тата ытти культурӑсем кашни колхозрах 3—5 гектартан кая мар лартса хӑвармалла. Ҫав участоксенчи ӗҫсене фермӑсенче ӗҫлекен работниксен, конюхсемпе ездовойсен вӑйӗпе туса ирттермелле.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Колхозсемпе совхозсенче вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли 1945 ҫулхи план ҫинчен» йышӑннӑ постановлени питӗ паха документ пулса тӑрать. Ҫак постановление пур колхозниксене те ӑнлантарса парас пулать. Сывӑх кунсенчех колхоз председателӗсемпе вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри работниксен канашлӑвӗсене ирттермелле. Унта ҫак постановление пурнӑҫа кӗртмелли майсене сӳтсе-явмалла. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсен ҫак постановлени мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла, колхозсенче вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ мӗнле пынине парти райкомӗсен бюровӗсемпе райисполкомсенче уйӑхра пӗрререн кая мар сӳтсе-явмалла.

Вылӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстерес тата унӑн тухӑҫлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе колхозсен, фермӑсен тата вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри работниксен социализмлӑ ӑмӑртӑвне анлӑн сарса пырар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 13-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, апрелӗн 13-мӗшӗнче Чехословаки ҫӗрӗнче **ГОДОНИН** хулине—ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен **МОРАВА** шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ. Ҫавӑн пекех тата **ТВАРОЖНА ЛГОТА, ПЕТРОВ, СУДОМЕРЖИЦЕ, РОГАТЕЦ, ТВРДОНИЦЕ, КОСТИЦЕ, ЛАНЖГОТ** ялӗсене йышӑннӑ. **ВЕНӐРАН** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре фронт ҫарӗсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, Австри ҫӗрӗнче **РИГЕЛЬСДОРФ, НИДЕР-АБСДОРФ, НИДЕР-ЗУЛЬЦ, ГРОСС ШВАЙНБАРТ, ВОЛЬКЕРСДОРФ, МЮНИКШТАЛЬ, ГРОСС ЗБЕРСДОРФ** ялӗсене тата **МАРТИНСДОРФ, ГРОСС ЭБЕРСДОРФ, ХАГЕНБРУНН** чугун ҫул станцийӗсене туртса илнӗ.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, **УКРАИНӐРИ** 2-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, урамсенче вӑйлӑ ҫапӑҫӑ хыҫҫӑн, апрелӗн 13-мӗшӗнче Австри столицине **ВЕНА** хулине—Германин кӑнтӑр районӗсем патне пымалли ҫулсене хӳтӗлекен оборонӑн стратегиллӗ паха узелне—туртса илнӗ.

ВЕНА патне пымалли вырӑнсене тата **ВЕНА** хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра, мартӑн 16-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 13-мӗшне ҫитиччен, фронт ҫарӗсем нимӗҫсен вунпӗр танковӑй дивизине, вӑл шутра эсэсовецсен 6-мӗш танковӑй армине, аркатса тӑкнӑ, тӑшманӑн 130.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ, 1.345 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ, 2.250 хир туппи тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ нумай пӗтерсе тӑкнӑ е тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Апрелӗн 12-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 40 танкне хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 37 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ХӖРЛӖ ЯЛАВЛӐ БАЛТИКА ФЛОЧӖН АВИАЦИЙӖ ТӐШМАН КАРАПӖСЕМПЕ ТРАНСПОРЧӖСЕНЕ ПЫРСА ҪАПНИ

Апрелӗн 11-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ **Пиллау** портӗнче тата уҫӑ тинӗсре (Пиллауран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре) тӑшман карапӗсемпе ҫар транспорчӗсене пырса ҫапнӑ.

Ҫапла пырса ҫапнипе тӑшманӑн пӗтӗмпе 23.000 тонна таякан пӗр миноносеҫӗпе пӗр транспортне шыва путарнӑ. Унсӑр пуҫне, бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе, 7.000 тонна таякан пӗр транспорта вут хыпса илнӗ тата 8.000 тонна таякан тепӗр транспорт сиенленнӗ.

☆ ☆ ☆

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Совет чаҫӗсем, ҫӳреме йывӑр шурлӑхлӑ вырӑнта малалла куҫса пырса, Мала Буда яле туртса илнӗ те, артиллери персе хӳтӗлесе тӑнипе, Морава шывӗ урлӑ каҫнӑ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, пирӗн подразделенисем Годонин хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнелле каякан чугун ҫула татнӑ. Пирӗн ытти чаҫсем паян тул ҫутӑлса килнӗ чухне Морава шывӗ урлӑ Годонин хулинчен кӑнтӑртарахра каҫнӑ та, ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, Годонин хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле каякан чугун ҫулпа шоссе ҫулне татнӑ. Годонин хулине хӑйсен аллинче тытса хӑварма хӑтланса, нимӗҫсем темиҫе хутчен те контратака тунӑ. Нимӗҫсем Годонин хулине пур енчен те хӳтӗлесе тӑма хатӗрленнӗ, хула тулашӗнче артиллери тата пулемет дочӗсем нумай туса тултарнӑ. Совет чаҫӗсем, ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, Годонин хулине ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ енчен тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енчен вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Хула урамӗсенче пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫура пирӗн ҫарсем тӑшман гарнизонне аркатса тӑкнӑ та кӑнтӑр тӗлне Годонин хулине—Чехословакин районӗ центрне тата ҫулйӗрсен паха узелне туртса илнӗ. Хулашӑн ҫапӑҫнӑ чухне нимӗҫсен пехота полкне аркатса тӑкнӑ. 350 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. Трофейсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Венӑран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ. Тӑшман хӑйӗн пехотине танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем хушса парса вӑйлӑлатнӑ, вара нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑма пуҫланӑ. Пӗр участокра нимӗҫ пехотин полкӗ, танксем пулӑшнипе, пирӗн ҫарсен речӗсем хушшине савӑлланса кӗрсе кайнӑ. Унтан пирӗннисем нимӗҫсене икӗ енчен те хӗстерсе лартнӑ та аркатса тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче гитлеровецсен виллисем нумай выртса юлнӑ тата ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ 30 танка яхӑн тӑрса юлнӑ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, пирӗн ҫарсем Венӑран 8 километр ҫурҫӗртерехре ларакан Хагенбрунн чугун ҫул станцине туртса илнӗ.

* * *

Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем, Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, паян Вена хулине туртса илнӗ. Австри столицине фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларасшӑн ҫапӑҫнӑ чухне совет чаҫӗсем хӑйсен ялавӗсене ӗмӗрлӗхе чапа кӑларнӑ. Нимӗҫсен командованийӗ шутласа хунӑ тӑрӑх, Вена хули нумайччен парӑнмасӑр ҫапӑҫса тӑмалла пулнӑ. 1944 ҫултах тӑшман Вена тавра оборона сооруженийӗсем тӑвас ӗҫе анлӑн сарса янӑ. Кунти вырӑн ахаль те Венӑна хӳтӗлесе тӑма питӗ майлӑ. Хӗвеланӑҫ енчен ку хулана тусем хӳтӗлесе тӑрассӗ, ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫ енчен сарлака тата тарӑн Дунай хӳтӗлесе тӑрать. Хулана кӑнтӑр енчен пырса кӗмелли вырӑнсенче нимӗҫсем вӑйлӑ тӗреклетнӗ оборона тӑрӑхӗ туса лартнӑ. Ҫав тӑрӑхра танксене чармалли канавсем, окопсемпе траншейӑсем тата дотсемпе дзотсем нумай пулнӑ. Хула патӗнчи кашни ялах йӗри-тавра нумайччен хӳтӗлесе тӑма хатӗрлесе хунӑ. Хаяррӑн ҫапӑҫса, Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем оборонӑн тулашри ункине татнӑ та апрелӗн 7-мӗшӗнче хулан кӑнтӑр пайӗнчи урамӗсенче ҫапӑҫма тытӑннӑ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах советсен ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен соединенийӗсемпе пехоти, тусем тӑрӑх ҫав тери хӑвӑрт пырса, тӑшмантан аякран иртсе кайнӑ та Дунай ҫине Венӑран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тухнӑ, вара хулана хӗвеланӑҫ енчен тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ енчен штурмлама тытӑннӑ. Апрелӗн 10-мӗшӗ тӗлне пирӗн ҫарсем Вена хулин Дунай каналӗн хӗвеланӑҫ хӗрринче вырнаҫса ларнӑ пайӗн ҫуррине ытла тӑшмантан тасатнӑ. Унтан вара тӑшманпа хулан Дунай каналӗпе Дунай шывӗ хушшинче вырнаҫса ларнӑ районӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ. Кунта нимӗҫсем уйрӑмах хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Вӗсем, хӑйсен танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсене илсе пырса, кашни ҫуртшӑн ҫапӑҫнӑ, час-часах хаяр контратакӑсем тунӑ. Совет отрячӗсене тупӑсем парса вӑйлӑлатнӑ, вара вӗсем кашни ҫурта штурмласа турта-турта илнӗ. Ӗнер пирӗн чаҫсем ҫурҫӗрти вокзал патне татса кӗнӗ те тӑшманпа Вена хулинчи чи пысӑк чугун ҫул узелӗн территорийӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ, гитлеровецсене Дунай хӗррине хӗстерсе лартнӑ. Пирӗн пӗр боец ӑнсӑртран Дунай хӗррине каякан ҫӗр айӗнчи ҫула тупнӑ. Ҫав ҫулпа кайса, совет подразделенийӗсем тӑшман тылне пырса тухнӑ та нимӗҫсене вӗсем кӗтмен ҫӗртен атакӑлама пуҫланӑ. Ҫӗрӗпех, пӗр минутлӑха та лӑпланмасӑр, урамсенче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ. Паян пирӗн ҫарсем нимӗҫсем хирӗҫ тӑнӑ юлашки вырӑнсене пусарса лартнӑ та Австри столицине тӑшмантан тасатса пӗтернӗ.

Гитлеровецсем Вена хулинчен пшӗлчӗк купи тума шутланӑ, вӗсем хула халӑхне хупӑрласа илнӗ хулари хӑрушӑ пурнӑҫ йывӑрлӑхӗсене тӳстерессшӗн пулнӑ. Пирӗн ҫарсем, ӑста та хӑюллӑ ҫапӑҫса, нимӗҫ командованийӗн усал планӗсене харама янӑ. Темиҫе кун хушшинче Австри столицине Венӑна фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ.

Вена—Европӑри чи пысӑк промышленность центрӗсенчен пӗри пулса тӑрать. Ку хулара Австри промышленноҫӗн питӗ пысӑк пайӗ вырнаҫса ларнӑ. Унсӑр пуҫне тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче нимӗҫсем Вена районне Германири ҫар завочӗсене нумайӗшне куҫарнӑ. Хулара авиаци завочӗсем, танксем, автомобильсем, паровозсемпе вагонсем тӑвакан пысӑк заводсем тата ытти предприятисем те нумай.

Шупашкар хулинчи парти активӗн пухӑвӗ

Ҫак кунсенче Шупашкар хулинчи парти активӗн пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху ВКП(б) Чӑваш Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ Чарыков юлташ хулана юсаса илемлетесси ҫинчен тунӑ доклада итлесе сӳтсе-яврӗ.

Чарыков юлташ Шупашкар хули мӗнле ӳссе пыни ҫинчен чарӑнса тӑчӗ. Совет влаҫӗн ҫулӗсенче Чӑваш республикин столици Шупашкар тӗпренех улшӑнса ҫӗнелчӗ. Вӑл уйрӑмӑнах вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хытӑ ӳсрӗ. Ҫӗнӗ те пысӑк предприятисем туса лартнӑ, киввисене юсаса пысӑклатнӑ. Шупашкар хулинче промышленность предприятийӗсен хисепӗ малашне те ӳссе пымалла: фабрикӑсемпе заводсем тума тата киввисене пысӑклатма правительство укҫа-тенкӗ нумай парать. Ҫавӑнпа пӗрлех пурӑнмалли ҫуртйӗрсем тата культура учрежденийӗсем лартас ӗҫ те вӑйланмалла. Вӑрҫӑ вӑхӑтне пӑхмасӑрах, больницӑна аслӑлатма, 24 хваттерлӗ ҫурт тума, ача сачӗсем тума правительство укҫа-тенкӗ уйӑрса парать. Театр ҫуртне юсаса пӗтерессӗ, сывӑх ҫулсенчех ҫӗнӗ театр туса лартмалла.

Шупашкар хулине ӳстерсе пырас задачӑсем ӑна культурӑллӑ, илемлӗ хула тума хушассӗ. Хулара садсемпе парксем пулмалла, урамсем таса та йӗркеллӗ, ҫуртсем илемлӗ пулмалла. Канмалли тата вӑхӑта савӑнӑҫлӑн ирттермелли учрежденисем пулмалла. Ҫаксене тума пирӗн лайӑх условисем пур: хула Атӑл хӗрринче ларать, йӗри-тавра вӑрмансемпе улӑхсем выртассӗ.

Анчах та хулана юсаса илемлетес ӗҫсем чылайӗшӗ ҫулран ҫулах пурнӑҫа кӗмесӗр юлассӗ. Хулана юсаса илемлетессипе хӑшпӗр предприятисемпе учрежденисен руководителӗсем пӗчӗк ӗҫ вырӑнне хурассӗ, хула Совет исполкомӗ вара вӗсенчен ҫирӗппӗн ыйтмасть. Иртнӗ ҫулта хулана юсамалли план пурнӑҫа кӗмерӗ, ҫав ӗҫ валли панӑ укҫа-тенкӗрен 76 проценчӗпе ҫеҫ усӑ курнӑ. Вӑтаҫӗрти урамсене—Карл Маркс тата Ленинград урамӗсене юсас ӗҫ вӑраха кайрӗ. Хӗрлӗ площадьпе театр площадьне, Роза Люксембург тата Союзная урамсене те йӗркене кӗртсе ҫитермен. Атӑл хӗрри тата садсемпе парксем те начарланса пырассӗ. Ҫак ҫитменлӗхсем мӗнрен килессӗ-ха? Материалсем шыраса тупас, транспорт тупас тата ӗҫсыннисене мобилизацилес тӗлӗшпе горисполком питӗ ҫавӑрӑнӑҫусӑр ӗҫлет, хулари предприятисемпе учрежденисем ҫак ӗҫе пачах та ҫителӗксӗр хутшӑнассӗ. Наркоматсем благоустройство ӗҫӗ ҫине кирлӗ пек ҫавӑрӑнса пӑхмассӗ, пуҫламӗш парторганизацисем те ку тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлессӗ.

Кӑҫал республика 25 ҫул тултарнӑ май, хулана юсаса илемлетес ӗҫсен хисепӗ ӳсрӗ. Ҫак ӗҫе кӑҫал 2 миллион та 386 пин тенкӗ укҫа хывма палӑртнӑ. Коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗсемпе сывлӑх учрежденийӗсене, хваттерсене, тротуарсене, урамсене, заборсене юсас тӗлӗшпе нумай ӗҫсем тумалла. Заводсемпе учрежденисен хӑйсен килкартисене тата ҫурчӗсене йӗркене кӗртмелле.

Хӑшпӗр работниксем, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсемпе витӗнсе, благоустройство ӗҫӗнчен пӑрӑнма хӑтланассӗ. Пӗр заводри завком председателӗ Петрушков тата «Сталинец» обществин председатель заместителӗ Тартаковский, стадиона юсама май ҫук тесе, ӗнентерме питӗ тӑрӑшассӗ. Ҫакӑн пек йӑлана татӑклӑнах пӗтерес пулать.

Чарыков юлташ горисполкома тата заводсен руководителӗсене стройматериалсем хатӗрлес тӗлӗшпе начар ӗҫленӗшӗн, ҫак тӗлӗшре вырӑнти майсемпе начар усӑ курнӑшӑн критиклет. Стройматериалсен промышленность Управленийӗ, Наркомместпром тата промкооперации Управленийӗ строительство материалӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе Совнарком йышӑннӑ решение ҫителӗксӗр пурнӑҫлассӗ-ха.

Чылай предприятисемпе учрежденисем благоустройство енӗпе плансем те туса хатӗрлемен (чӑлха фабрики тата ыттисем те). Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫекен завод таврашӗнче урамсене йӗркене кӗртсе ҫитермен. Хулари чылай ҫуртйӗрсем питӗ юхӑнса кайнӑ (Чӑвашторг склачӗ, Военторг отделенийӗн, Чӑвашгражданстрой тресчӗн ҫурчӗсем тата ыт. те). Уйрӑм организацисем (Поликлиника, пристань) хӑйсен территорийӗсенче йӗркелӗх тума хӗрӳллӗн тытӑнчӗҫ ӗнтӗ, вӗсенчен пурин те пример илмелле.

Чӑваш республики 25 ҫул тултариччен икӗ уйӑх ытларах кӑна юлчӗ. Ҫак вӑхӑт хушшинче, тӗпрен илсен, хулана юсаса илемлетмелли плана пурнӑҫа кӗртсе ҫитермелле. Садсемпе парксене, Атӑл хӗррине, урамсене юсамалла, 10.000 тӗп йывӑҫ лартмалла, шыв станцине туса лартмалла тата стадиона юсамалла, чугун ҫул вокзалне йӗркене кӗртмелле, пристань хуҫалӑхне юсамалла, заборсемпе хапхасене юсаса лартмалла.

Кӑҫалхи январь уйӑхӗнче парти горкомӗн пленумӗ столовӑйсен трестне, Чебторга, аптека Управленине, ОРС-сене тата ыттисене те харпӑрхӑй предприятийӗсене юсаса йӗркелеме хушса хӑварчӗ. Анчах та ҫав организацисен руководителӗсем ҫак решение пурнӑҫа кӗртме васкамассӗ-ха.

Хулана юсаса илемлетес ӗҫе хулари пӗтӗм халӑх тата, чи малтан, партипе совет активӗ хутшӑнмалла. Мускавра малта пыракан предприятисен рабочийӗсем хулана юсас ӗҫре темиҫешер кун ӗҫлеме пулса обязательствӑсем илессӗ. Фабрикӑсемпе заводсем хулан пӗтӗм кварталӗсене юсама пулассӗ. Мускав ҫыннисен ҫак пуҫарӑвне йышӑнса илсе, Шупашкарпа Йошкар-Ола хулисем хушшинчи ӑмӑрту договорӗ тӑрӑх илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлама активлӑнрах тытӑнмалла.

Хулари халӑх вӑйӗпе тунӑ пурлӑха лайӑх сыхласа усрама вӗрентес тӗлӗшпе воспитани ӗҫне вӑйлатас пулать. Ҫак ӗҫе шкулсенчен—ачасемпе ҫамрӑксем хушшинчен пуҫламалла, вӗсене харпӑрхӑй ҫуртне, харпӑрхӑй урамне тата хулана юратма вӗрентмелле.

Чарыков юлташ доклачӗ тӑрӑх прениre 11 ҫын тухса каларӗ.

Сывлӑх Халӑх Комиссарӗ Лихачев юлташ ҫӑкӑр комбиначӗн, Водосветӑн, Гражданстройӑн руководителӗсене вӗсем хӑйсен территорийӗсене таса тытманнишӗн критиклет. Хулари санинспекци санитари правилисене пӑсакансене хирӗҫ ҫителӗксӗр кӗрешет.

Бунин юлташ актива хӑйсен заводӗ малашне мӗнле ӳссе пырасси ҫинчен каласа пачӗ тата хулара радио ӗҫне лайӑхлатма, автоматлӑ телефон станцийӗ лартассишӗн тӑрӑшма сӗнчӗ.

Чӑваш АССР Совнарком председателӗн заместителӗ Терентьев юлташ хулари чылай ҫуртсене йӗркесӗр тытса усрани ҫинчен калать. Хулана юсаса илемлетес ӗҫре пур учрежденисемпе предприятисем те хутшӑнса ӗҫлемелле, тет вӑл.

Хула Совет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ благоустройство енӗпе мӗн тума палӑртни тата халӗ мӗн туни ҫинчен каласа пачӗ. Ҫак енӗпе хулана Наркомхозпа Росснабсбыт начар пулӑшассӗ. Халӗ хулана тасатмалли уйӑхлӑх пырать. Анчах чылай предприятисемпе учрежденисем («Росглаввино» совхозӗ, чӑлха фабрики, Наркомзем, Наркомюст, Крахмалтрест тата ыттисем те) ҫак уйӑхлӑха халӗ те хутшӑнман-ха.

Пуху Чарыков юлташ доклачӗ тӑрӑх решени йышӑнчӗ. Ҫав решенире хулари парторганизацисен сывӑхри задачисене палӑртса хӑварчӗ.

Парти активӗн пухӑвӗнче Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Матвеев юлташ, ВКП(б) Обкомӗн секретарӗсем Ахазовпа Андреев юлташсем, ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ ҫумӗнчи Парти Контроль Комиссийӗн Чӑваш республикинчи Уполномоченнӑйӗ Логвин юлташ тата ыттисем те пулчӗҫ.

США президенчӗ Франклин Д. Рузвельт вилнӗ май

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Мускав хулинчи государство учрежденийӗсене пурне те апрелӗн 14-мӗшӗпе 15-мӗшӗнче хӑйсен ҫурчӗсем ҫине, США президенчӗ Франклин Д. Рузвельт вилнӗ май, хурлӑхлӑ ялавсем ҫакма хушнӑ.

И. В. Сталин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посолне В. А. Гарриман господина йышӑнни

Апрелӗн 13-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посолне В. А. Гарриман господина йышӑннӑ.

Йышӑнура СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов пулнӑ.

ВИЛЬНЮС ХУЛИНЧЕ КОНСЕРВАТОРИ УҪНӐ

Вильнюс хулинче государство консерваторийӗ уҫӑлнӑ. Вӑл Литва опера театрӗпе филармонийӗ валли ҫӗнӗ кадрсем хатӗрлемелле. (ТАСС).

РСФСР Совнаркомӗнче

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ кӑҫалхи апрелӗн 9-мӗшӗнче йышӑннӑ хӑйӗн постановленийӗнче облисполкомсене, крайисполкомсене, автономиллӗ республикӑсен совнаркомӗсене тата тӳрремӗнех республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласен исполкомӗсене хула Совечӗсен черетлӗ сессийӗсенче халӑха медицина пулӑшӑвӗ парас ыйтӑва сӳтсе-явма хушнӑ.

Сесси ларӑвӗсенче сывлӑхпа профилактика учрежденийӗсен (больницӑсен, поликлиникӑсен, ача ҫуратмалли ҫуртсен, консультацисен, ача яслисен тата ыттисен) ӗҫне лайӑхлатас, халӑх хушшинчи санитари ӗҫне туса ирттерес (хуласене тасатас, ушкӑнлӑ апатлану ӗҫӗнче йӗрке туса хурас), ҫавӑн пекех тата халӑх сывлӑхне упрас ӗҫе хула Совечӗсен исполкомӗсем ертсе пырассипе лайӑхлатас тӗлӗшпе тумалли конкретнӑй ӗҫсен планне сӳтсе-явма палӑртнӑ.

Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ РСФСР-ӑн Сывлӑх Халӑх Комиссарне Третьяков юлташа—Нарком заместителӗсене, Наркомздравӑн управленийӗсемпе отделӗсен начальникӗсене ӗҫсынни депутачӗсен хула совечӗсен сессийӗсене яма хушнӑ.

Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ РСФСР Сывлӑх Халӑх Комиссариатне 1945 ҫулхи июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне РСФСР Совнаркомне РСФСР-ти хуласенчи халӑх сывлӑхне лайӑхлатмалли мероприятисем пирки сӗнӳсем таратма хушнӑ.

ЯЛХУҪАЛӐХ ҪИНЧЕН КӐЛАРНА ҪӖНӖ ЛИТЕРАТУРА

Ялхуҫалӑх литератури кӑларакан государство издательстви ҫӗнӗ кӗнекесем кӑларнӑ. Вӗсем хушшинче ҫакӑн пек кӗнекесем пур: колхоз председателӗсемпе уйхир бригадирӗсен руководстви — «уйхир ӗҫӗсен агротехники». Ӑна Мосолов академик, ялхуҫалӑх наукисен кандидачӗ Скворцов тата Чижевский профессор хатӗрленӗ. «Колхоз производствин ыйтӑвӗсем» тата «Колхозсенче вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ» ятлӑ сборниксем.

Иккӗмӗш хут «Колхоз председателӗн справочникӗ» пичетлесе тухнӑ. Кӗнеке тиражӗ—100.000 экземпляр. (ТАСС).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш республикинчи финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи пĕррекĕш кварталти итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, республикăри финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн çак çулхи малтанхи кварталти итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура çаксем мала тухнине палăртнă:

Октябрьски районри финанс пайĕ (заведующийĕ Егоров юлташ, райсовет исполком председателĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Леонтьев юлташ) укçа-тенкĕ пухмалли плана 149 процент тултарнă. Ăна Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 15.000 тенкĕ (вăл шутран финанс пайĕн заведующине 1.500 тенкĕ) преми пама йышăннă.

Куславкка районĕнчи финанс пайĕ (заведующийĕ Герасимов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Прытченков юлташ) укçа-тенкĕ пухмалли плана 121 процент тултарнă. Ăна 10.000 тенкĕ (вăл шутран финанс пайĕн заведующине 1000 тенкĕ) преми памалла тунă.

Шупашкар хулинчи финанс пайĕ (заведующийĕ Бирюкова юлташ, хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) укçа-тенкĕ пухмалли плана 108 процент тултарнă. Ăна 5.000 тенкĕ (вăл шутран финанс пайĕн заведующине 800 тенкĕ) преми памалла тунă.

Пĕрремĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри тата Çĕрпÿ районĕсенчи финанс пайĕсем лайăх ĕçленине палăртнă. Çак ĕçе Элĕк, Калинино, Иплей, Вăрнар, Елчĕк районĕсенчи, Улатăр, Канаш тата Çĕмĕрле хулисенчи финанс пайĕсем те вăйлатнă.

Вырăнти топливо промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, вырăнти топливо промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура çаксем мала тухнине палăртнă:

Улатăр вăрманпромхозĕ (директорĕ Горланов юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ Вислобоков юлташ) вутă хатĕрлемелли плана касас енĕпе 120 процент, турттарас енĕпе 127 процент тултарнă. Ăна Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата 20.000 тенкĕ преми пама йышăннă.

Сĕнтĕрвăрри вăрманпромхозĕ (директорĕ Смирнов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ) вутă хатĕрлемелли плана касас енĕпе 247 процент, турттарас енĕпе 147 процент тултарнă. Ăна 15.000 тенкĕ преми памалла тунă.

Кÿкеç вăрманпромхозне (директорĕ Максимов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов юлташ) тата **Октябрьски вăрманпромхоза** (директорĕ Митин юлташ, райсовет исполком председателĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Леонтьев юлташ) 10.000-шер тенкĕ преми памалла тунă.

***

РСФСР Совнаркомĕпе ВЦСПС-ра

РСФСР Совнаркомĕпе ВЦСПС, РСФСР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, **Чăваш АССР Совнаркомне виççĕмĕш преми**—10.000 тенкĕ пама йышăннă.

Çураки умĕн

30 ГЕКТАР КĔРХИ ТЫРĂСЕНЕ АПАТЛАНТАРНĂ

СĔНТĔРВĂРРИ, апрелĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановление «Пищевик» колхоз членĕсем хăйсен пухăвĕнче сÿтсе явреç тата конкретлă обязательствăсем илчĕç. Пирĕн задача—кашни гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илесси пулса тăрать. Çав задачăна пурнăçласси пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем тимлĕн кĕрешме тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне 12 гектар клевер акрăмăр, 30 гектар кĕрхи тырăсене çĕрнĕ тислĕкпе апатлантартăмăр. Колхоз суракине пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ.

М. ЯДРОВ,
«Пищевик» колхоз председателĕ.

КОЛХОЗСЕМ ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ЙЕПРЕÇ. Малта пыракан колхозсем вăрлăх çитмен колхозсене тырă парса пулăшаççĕ. «Трактор» колхоз Калинин ячĕпе тăракан колхоза 360 пăт вăрлăхлăх тырă пачĕ. «Путиловка» колхоз «Строитель» колхоза 24 гектар акмалăх, «Красный урожай» колхоза 30 центнер вăрлăх пачĕ. Çавăн пекех «Правда», «МОПР» тата ытти хăшпĕр колхозсем те вăрлăх çитмен колхозсене вăрлăхлăх тырă парса пулăшаççĕ.

П. КУРАКОВ.

КЛЕВЕР АКАÇÇĔ

Калинино районĕнчи пур колхозсем те клевер акма тытăннă, районĕпе апрелĕн 14-мĕшĕ тĕлне 256 гектар акнă. Çавăнпа пĕрлех кĕрхи тырăсене апатлантарас ĕç те пуçланнă. «Первое Мая» колхоз 30 гектар çинчи кĕрхи тырра çĕрнĕ тислĕкпе апатлантарнă. «Партизан» колхозра 19 гектар çинчи калчасене апат панă. Çак агротехникăллă паха мероприятие ытти колхозсенче те пурнăçа кĕртеççĕ.

ВЫЛЬĂХСЕНЕ СИЛОС ÇИТЕРЕÇÇĔ

ÇĔРПŸ. «Ĕмĕт», «Пионер», «Новая жизнь», «Коминтерн», «Кульмет» тата ытти нумай колхозсем силос хывнă шăтăксене уçса, силос мĕнле тăнине тĕрĕслерĕç, силоса выльăхсене пама тытăнчĕç. Нумай колхозсенче силос аван хĕл каçнă, выльăхсем ăна юратса çиеççĕ. «Лисерия», «Этна», «Красный Октябрь» колхозсем силос шăтăкĕсене уçса пăхман. Çак колхозсен халĕ выльăхсене çитерме сĕткенлĕ апатсем çителĕксĕр, çапах та кунта силоспа усă курма тăрăшмаççĕ.

А. ИВАНОВ.

ÇУРАКИНЕ ТУХМА ХАТĔР

Чурачăк районĕнчи «Пчелкино» колхоз çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ, пахалăхĕ аван. Ялхуçалăх машинисем юсавлă. Пирĕн колхозăн пĕр сеялка кăна. Çавăнпа эпир «Буйга» колхозăн усă курман сеялкине илсе юсарăмăр. Кăçал сухаçăсене сдельщинăпа ĕçлеттеретпĕр. Нормăсене лаша вăйне кура паратпăр.

Суркуннехи ĕçсем пуçланчĕç ĕнтĕ. Эпир 17 гектар клевер акрăмăр тата 20 гектар çинчи кĕрхи калчасене апатлантарма тытăнтăмăр.

Ф. ГАЛАКТИОНОВ,
«Пчелкино» колхоз председателĕ.

Краснодар крайĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине сÿтсе яваççĕ

Председатель пухăва уçрĕ. Президиум председателĕ пухăвăн кун йĕркипе колхозниксене паллаштарчĕ. Агитатор Краснодар крайĕнчи колхозниксен чĕнĕвĕ пичетленсе тухнă «Чăваш Коммуни» хаçата тытса, Хĕрлĕ партизансен ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен чĕнĕвне вуласа ăнлантарма тытăнчĕ. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă колхозăн колхозникĕсем хăйсен хуçалăхне хăвăрт ура çине тăратса пыни тата вĕсем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илни «Победа» колхоз членĕсене те хаваслантарать.

Красноармейски районри «Победа» колхоз колхозникĕсем вăрçă пынă вăхăтра хăйсен колхозĕн хуçалăхне нумай тĕреклетнĕ. Вăрçăччен ялхуçалăх ĕçĕсемпе кая юлса пынă колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче районра малта пыракан колхозсемпе танлашнă. Иртнĕ çулта колхоз кашни гектартан 233 центнер купăста, 210 центнер кăшман, начар мар тухăçлă тĕштырă туса илнĕ. Колхозри иккĕмĕш бригадăри колхозниксем кашни гектартан 19 центнер вика тата вăйлă тухăçлă пăрçа туса илнĕ.

Государство умĕнче тăракан обязательствăсене срокра пурнăçланă. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 133 центнер тырă панă. Сĕт-çу, çăмарта, çăм памалли обязательствăсене срокра пурнăçланă, аш-какай пĕлтĕрех парса татнă. 1944 çулхи парăмсене парса татнă хыççăн вăрлăх, страховка, фураж фончĕсене çителĕклĕ таран уйăрса хăварнă. Вăрлăхсене сортласа кондицие лартнă. Ĕçкунĕсем тăрăх 2-шер килограмм тĕштырă, 2-шер килограмм пахча-çимĕç валеçнĕ.

Кăçалхи суракинче колхозăн пĕтĕмпе 284 гектар акмалла. Колхозри кашни бригада çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Колхозри II-мĕш бригадăн бригадирĕ Димитриев юлташ Краснодар крайĕнчи Хĕрлĕ партизансен ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен чĕнĕвĕ çине ответлесе çапла каларĕ:

— Манăн бригада çуракине хатĕр. Сухаçăсене уйăрнă. Кÿлмелли хатĕрсене юсанă, вĕсем çителĕклĕ. Вăрлăхсен пахалăхĕ лайăх. Эпĕ, Чăваш республики 25 çул тултарнă уяв ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, колхозри пĕрремĕш бригадăна ăмăртăва чĕнетĕп,—терĕ Димитриев юлташ.

Ун хыççăн пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Иванова юлташ сăмах илчĕ.

— Иккĕмĕш бригадăн чĕнĕвне йышăнатăп. Манăн бригадăри колхозниксем те çуракине кĕске вăхăтра иртерме хатĕр. Мĕн кирлине туса çитернĕ,—терĕ Иванова юлташ.

Колхоз председателĕ коммунистка Трошкина юлташ паян тумалли ĕçсем çинчен каларĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем кÿршĕри Сталин ячĕпе тăракан колхоза социализмлă ăмăртăва чĕнме йышăнчĕç.

С. ШАДИН.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

М. В. ЛОМОНОСОВ ВИЛНĔРЕНПЕ 180 ÇУЛ ÇИТРĔ

Михаил Васильевич **Ломоносов** — гениллĕ ученый, поэт, пĕрремĕш вырăс академикĕ, вырăссен аслă патриочĕ. Вăл 1711 çулта Холмогоры патĕнчи Денисовка ялĕнче пулăçă çемьинче çуралнă. 1765 çулта апрелĕн 15-мĕшĕнче вилнĕ.

М. В. Ломоносов 1-мĕш Петр патша пуçланă ĕçе—Российăна вĕрентсе çутта кăларас тата Российăн çĕр çинчипе çĕр айĕнчи пуянлăхне алла илес ĕçе малалла туса пынă. М. В. Ломоносов питĕ нумай наукăсем тĕлĕшпе чаплă ĕçсем тунă. Вăл Российăри пĕрремĕш хими лабораторине уçнă, хальхи вăхăтри химин пуçламĕш никĕсне хывнă, энерги пĕтмест те хутшăнмасть те текен закона тупнă, япаласем атомран тăраççĕ текен теорие, химилле растворительсен теорине, газсем мĕнле тытăнса тăни çинчен калакан теорие, тусем вулкансем пирки пулса кайнă текен теорие пуçарса ярса йĕркеленĕ, сывлăшра электричество пурри пĕлнĕ, вырăссен çĕнĕ литература чĕлхине пуçарса ярса йĕркеленĕ, вырăс чĕлхин паукăллă пĕрремĕш грамматикине çырнă, поэзилле произведенисем çырнă, Мускаври университета уçнă т. ыт. те. М. В. Ломоносов — Российăра материалистла наукăсен никĕсне хываканĕ пулса тăрать.

Ÿкерчĕк çинче: гениллĕ ученый, поэт, патриот **М. В. Ломоносов.**

ВЦСПС-ра

УЙРĂМ ÇЫНСЕМ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХПЕ КАЙĂК-КĔШĔК ЫТЛАРАХ ĔРЧЕТЕССИ ÇИНЧЕН

ВЦСПС секретариачĕ уйрăм çынсем выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк ытларах ĕрчетесси çинчен решени йышăннă.

Нумай рабочисемпе служащисем хăйсем валли вак выльăхпа кайăк-кĕшĕк тунинă.

ВЦСПС секретариачĕ пур профорганизацисене те выльăх апачĕ туянас, выльăха çÿретме, утă çулса илме участоксем илес ĕçре уйрăм çынсене пулăшма хушнă.

Профорганизацисене уйрăм çынсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетни кирлĕ ĕç пулса тăнине ĕççыннисене ăнлантарса пама, консультацисем, лекцисемпе докладсем иртерме сĕннĕ.

Фабрикăпа завод комитечĕсен предприятисенчи рабочи снабжени отделĕсем рабочисемпе служащисем валли хăйсен подсобнăй хуçалăхĕсенчен сысна çурисем сутчăр тесе тăрăшмалла. (ТАСС).

Трумэн калани

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт кĕтмен çĕртен вилсе кайнă хыççăн виçĕ сехет иртсен Трумэн президент ĕçĕсене тума пуçланă, пичет представителĕсене вăл вăрçа ăнăçлăн вĕçличченех вăрçасси çинчен пĕлтернĕ. Вăл тата государство секретарьне Стеттиниуса Сан-Франциско хулинче пухăнмалли конференци палăртнă вăхăтрах пухăнасси çинчен пĕлтерме полномочи панă. Трумэн çавăн пекех тата Рузвельт политикине тытса пыма пулни çинчен тата Рузвельт кабинетне хăварасси çинчен пĕлтернĕ.

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн çапла каласа панă: «Икĕ фронтра та—хĕвелтухăçĕнче те, хĕвеланăçĕнче те—эпир хамăрăн аларн мĕнпур вăйпа вăрçа ăнăçлăн вĕçличченех вăрçассине тĕнче шанса тăтăр», тенĕ.

* * *

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çĕнĕ президенчĕ, демократиллĕ партин паллă деятелĕ, Гарри Трумэн 1884 çулхи майăн 8-мĕшĕнче Ламар хулинчи (Миссури штачĕ) фермер çемьинче çуралнă. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл пĕр вăхăт хушши банкра ĕçленĕ, унтан каллех киле таврăннă. США тĕнчери пĕрремĕш вăрçа хутшăннă хыççăн Трумэна армие илнĕ. Пĕр вăхăт хушши вăл Сили фортĕнчи артиллери шкулне çÿренĕ. 1918 çулхи март уйăхĕнче ăна çапăçури çара илнĕ те Европăна янă. Вăл батарея командирĕ пулнă, Францире çапăçнă. Вăрçă пĕтнĕ çĕре Трумэн капитан чинне илнĕ. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн ăна майор чинĕпе сартан киле янă.

1922 çулта Трумэна Миссури штатĕнчи Джексон графствинче судья пулма суйласа лартнă. Çав вăхăтра вăл Канзас-Ситире право шкулне вĕренме кĕнĕ, унта 1925 çулччен вĕреннĕ. 1926 çулта Трумэна Джексон графствинче суд председательне суйласа лартнă, çав ĕçре вăл 1934 çулччен ĕçленĕ. Çав вăхăтра Трумэн хăйĕн администраци ĕçĕсемпе паллăннă.

1934 çулта Трумэна сената суйланă, 1940 çулта тепĕр хут сената суйланă. 1941 çулăн пуçламăшĕнче ăна çар промышленность ĕççĕсене тĕпчекен сенат комиссийĕн пуçлăхĕ туса хунă.

Трумэн Рузвельтăн шалти тата тулашри политикăллă ĕçĕсем майлă тăнă, вăл изоляционизма хирĕç, пĕтĕм тĕнчере пĕрлешсе ĕçлессишĕн пĕрре кăна мар тухса каланă.

1944 çулта çулла демократиллĕ партин съезчĕ ăна вице-президент вырăнне суйлама кандидата тăратнă. 1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Трумэна США-н вице-президенчĕ пулма суйласа лартнă.

США-ра ХУРЛĂХЛА КУН ТУНĂ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент апрелĕн 14-мĕшне, Рузвельт вилнĕ пирки, хурлăхлă кун тесе шутламалли çинчен пĕлтернĕ.

США-ра РУЗВЕЛЬТ ВИЛНИ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт ăнсăртран вилсе кайни нумай американецсемшĕн пысăк хуйхă пулнă. Урамсенче, радиорепродукторсемпе информаци агентствисем умĕнче çынсем пухăнса тăнă, тĕплĕрех хыпарсем пĕлтерессине кĕтсе тăнă. Радиостанцисем, яланхи программăна пама чарса, юлашки хыпарсен бюллетенĕсене, Рузвельт вилнĕ пирки каланисене пĕрмаях парса тăнă. Хаçатсем ятарласа уйрăм номер кăларнă, хура рамкăллă заголовоксем пĕрремĕш страницăсене пĕтĕмпе тенĕ пекех йышăннă. Информаци агентствисем çавăнтах паллă деятельсем Рузвельт вилнĕ пирки каланисене пĕлтерме тытăннă.

РУЗВЕЛЬТ МĔНЛЕ ВИЛНĔ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт врачĕ Мокинтайр вице-адмирал çапла каланă: президент кĕтмен çĕртен вилсе кайнă. Ĕнер ирхине кăна мана ĕçсем чип-чиперех пыни çинчен Уорм-Спрингсран телефонпа пĕлтернĕччĕ, тенĕ.

Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт Уорм-Спрингсра икĕ эрне пурăннă. Ĕнер кăнтăрла вăл художник унăн портретне ÿкернĕ вăхăтра тăнран кайнă. Урăх вара тăна кĕмен, лăпкăн вилсе кайнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, союзниксем Девентерпа Зютфен хулисем хушшинче Эйссель шывĕ урлă каçса наступлени тăваççĕ, наступлени ăнăçлă пырать. Тăшман вăйлăн хирĕç тăрса çапăçать. Аллер шывĕ урлă каçса, икĕ çĕрте укреплени тунă. Союзниксем Ганновер хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Целле хулине йышăннă. Кунтан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен пехотăпа танковăй чаçĕсем Гарц тăвĕсене тăшмантан тасататçĕ. Наумбург хулинчен кăнтăртарахра Заале шывĕ урлă каçнă. Вăл шыв урлă тата тепĕр тĕлте каçнă. Наступлени туса пырса, Майн шывĕн тури пайĕнче унăн икĕ хĕрринче Гасфурт районĕнче темиçе хула тытса илнĕ. Гелльбронн хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем Кохер шывĕ çинче 13 километр сарлакăш укреплени туса хунă. Рур «миххи» районĕнче операцисем ăнăçлă пулса пыраççĕ.

Апрелĕн 11-мĕшĕнче Хĕвеланăç фронтĕнче союзниксем 40.159 çынна тыткăна илнĕ.

СОЮЗНИКСЕМ ВЕЙМАР ХУЛИНЕ ЙЫШĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио ĕнер çапла пĕлтернĕ: американецсен Паттон генерал ертсе пыракан 3-мĕш армийĕн чаçĕсем Веймар хулине пăшалпа пĕрре пемесĕрех йышăннă. Америка çарĕсем патне велосипедпа пастор пынă та Веймар парăнни çинчен пĕлтернĕ, вара каялла кайнă.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ВАРЛАНĂ КУЛЬТУРĂЛЛĂ ПАХА ЯПАЛАСЕНЕ ТУПНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен 3-мĕш армийĕпе пĕрле çÿрекен корреспонденчĕ Мейнс пĕлтернĕ тăрăх, 5-мĕш пехота дивизийĕн чаçĕсем Гиссен хулинчен 16 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри пĕр дворецра темиçе çĕр хаклă картина тата темиçе вунă алçырăвĕ тупнă. Çаксене пурне те нимĕçсем Европăри нумай столицăсенче çаратса пухнă, кайран вара пĕр хуралсăрах пăрахнă.

ФРАНЦИ ЖУРНАЛĔ ФРАНЦИРИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ МАГНАЧĔСЕН СУТĂНЧĂКЛА ĔÇĔСЕНЕ ТĂРĂ ШЫВ ÇИНЕ КĂЛАРАТЬ

ПАРИЖ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Эрнере пĕрре тухса тăракан «Аксьон» журнал Францири промышленность магначĕсен вăрçăччен халăха хирĕç тунă ĕçĕсене, сăмахран Вандель çемьин ĕçĕсене тата вĕсен хальхи вăхăтра тăвакан вăрттăн ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан материалсем пичетлет. Сăмахран, Вандель çемьи Герингпа çыхăну тытни çинчен, нимĕçсем Франције оккупациленĕ хыççăн Вандельсем Лотарингие (Вандельсен предприятийĕсем çакăнта) Германие сутни çинчен пĕлтерекен материалсем пичетлесе кăларнă.

Çакăн хыççăн Вандельсем журнала суда панă, унтан 3 миллион франк укçа шыраса илесшĕн пулнă.

Вандельсем хыççăн «Аксьон» редакцине йывăр промышленность руководителĕсен пĕрлешĕвне кĕрекен сакăр компани суда панă, редакцирсн 10 миллион франк укçа шыранă.

Журнал редакцийĕ журнала вулакансене чĕнсе статья пичетлесе кăларнă, хăйне пулăшма чĕннĕ тата «Аксьон» журналпа пĕр шухăшлă пулнине палăртмашкăн митингсем туса иртерме сĕннĕ. Хальхи вăхăтра «Аксьон» журналăн редакцине çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче йышăннă резолюцисем пырса тăраççĕ, вăл резолюцисенче хирĕçлÿ юхăмĕн органĕсенчен пĕрине трестсен представителĕсем тапăннине хирĕç протестлеççĕ. Редакцие çавăн пекех журнала пулăшас шутпа митингсенче пухнă укçа пырса тăрать.

Çак кунсенче «Аксьон» редакцийĕ «Мютюалитэ» ятлă пысăк залра митинг туса иртернĕ. Митинг çакăн пек лозунгпа иртнĕ: «Трест представителĕсем хирĕçлÿ юхăмĕн журналне хирĕç пуçланă процесра халăх судья пулмалла». Митингра «Аксьон» журналăн руководителĕсем, çавăн пекех «Фрон Насьональ» организацийĕн представителĕсем, «Халăх ирĕклĕхĕ юхăмĕн», Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕн тата ытти организацисен представителĕсем «Комптэ де форж» представителĕсен халăха хирĕçле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă.

Пулас процесра «Аксьон» журнала хÿтĕлекен адвокатсенчен пĕри Норман митингра çапла каланă: асăннă трест тăшманпа пĕрле ĕçленине уççăн кăтартса паракан материалсем пур, эпĕ вĕсене суда тăрататăп, тенĕ.

—o—

Америка бомбардировщикĕсем Токио хулине тапăннă

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, паян «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксем Токио хулине тапăннă.

ТОКИО, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: паян ирхипе Мариан утравĕсем çинчи «Б—29» йышши 150 йывăр бомбардировщика яхăн Токио хулин хĕвеланăç районĕсене тата Сидзуока районне тапăннă. Икĕ сехет хушши бомбăсем пăрахнă.

Районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсем

Лайăх сортлă вăрлăх акни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн государство, тырă вăрлăхне лайăхлатас ыйтăва пысăк вырăна хурса, ăна туса илме ялан пулăшса пынă.

1921 çулта В. И. Ленин алă пуснă декретра сортлă вăрлăх ĕрчетес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлемеллине тата çак ĕçе мĕнле организацилемеллине тĕплĕн кăтартса панă.

1937 çулта пирĕн правительство сортлă вăрлăх ĕрчетесси çинчен ятарласа постановлени йышăннă. Колхозсемпе совхозсене лайăх сортлă, суйласа илнĕ вăрлăхсем парса тăрас шутпа, государство селекци станцийĕсем тата районсенче вăрлăх ĕрчетекен хуçалăхсем тунă. Çак станцисемпе райсемхозсем ăнăçлă ĕçлени пе пула, пĕрчĕллĕ тырăсен вăрлăхĕсем нумай лайăхланчĕç, сортлă вăрлăх акакан çĕр лаптăкĕ нумай пысăкланчĕ.

Пирĕн республикăри малта пыракан райсемхозсем вăрлăхлăх тырă туса илес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Сортлă вăрлăхсем акса лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн тăрăшаççĕ.

Республикăри 13 райсемхоз хăйсене организациленĕренпе пĕр миллион пăта яхăн сортлă вăрлăх государствăна панă.

1944 çулта кăна Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан вăрлăх хуçалăхĕ государствăна 10 400 пăт, Вăрмар районĕнчи «Красный Мурат» колхоз 14.500 пăт, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз 15 390 пăт таса вăрлăх панă. Сортлă вăрлăхсем туса илес тĕлĕшпе Муркаш районĕнчи «Свобода», Комсомольски районри «Мурат», Чкаловски районри Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те аван ĕçлеççĕ.

Анчах та республикăра начар ĕçлекен, хăйсене хушнă ĕçе начар туса пыракан райсемхозсем те пур-ха. Сортлă вăрлăхсем тумалли плана Советски районри «Искра» колхоз (председателĕ Алексеев) иртнĕ çулта 66 процент, Октябрьски районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз 51 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» колхоз 59 процент, Калинино районĕнчи «Броневик» колхоз 69 процент кăна тултарнă. Çак райсемхозсем юлса пыни, чăн малтанах, агротехника мероприятийĕсене пурнăçласа пыманнинчен, тырра кĕске вăхăтра акманнинчен, вырăнти удобренисемпе усă курманнинчен тата акнă тырра вăхăтра, тăкаксăр пухса илменнинчен килет.

Канаш районĕнчи вăрлăх ĕрчетекен «Искра» колхоз 1944 çулта çуракине июнь уйăхĕччен тăсрĕ, çавна пула начар тухăçлă тырпул туса илчĕ. Советски районри райсемхозра, вăрлăхлăх тырра начар тасатнă тата начар сухаласа акнă пирки, тырă çинче çумкурăкĕсем нумай пулнă, сурхи тулăпа сĕлĕ кăмпаллă пулнă. Октябрьски районра ака вăхăтне тăсни пе тата тăпрана начар çемçетнипе пула, тырă тухăçĕ 5—6 центнер кăна пулнă.

Сортлă вăрлăха ĕрчетесси тата ăна сарасси çине хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе машинно-тракторнăй станцисем те кирлĕ пек пăхмаççĕ. Вăл ĕçе хисеплемеççĕ. Çавăн пирки райсемхозсем ака ĕçне вăраха тăсаççĕ, вăрлăхлăх тырра кая юлса акаççĕ.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ А. А. Андреев юлташ приказĕ тăрăх, МТС-сем райсемхозсенче ĕçлеме чăн малтан тата чи лайăх тракторсемпе ытти машинăсем уйăрмалла. Анчах та хăшпĕр МТС директорĕсем çак приказа пурнăçласа пымаççĕ-ха.

Канаш МТС директорĕ Зайцев юлташ 1944 çулта «Искра» райсемхозра ĕçлеме 4 трактор уйăрнă, анчах та çак тракторсем юсавсăр пулнă, нимĕн чухлĕ те сухалайман. Çавăн пекех Куславкка, Етĕрне, Çĕрпÿ тата ытти хăшпĕр МТС-сен директорĕсем те райсемхозсем çине тивĕçлипе çаврăнса пăхман, ака ĕçне хăвăртрах тата лайăхрах иртерме пулăшман.

Иртнĕ çулхи йăнăшсем нумай МТС-семшĕн урок пулса тăмалла. Апла пулин те, хăшпĕр МТС-сем вăрлăх ĕрчетекен колхозсемпе çак вăхăта çитсе те договорсем туман.

СССР Совнаркомĕн «Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановленийĕ райсемхозсен пĕлтерĕшне татах та нумай çĕклерĕ. Райсемхозсен районра малта пыракан кăтартуллă хуçалăхсем пулмалла. Çавăнпа та райсемхозсен, çуракине тата ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсене вăхăтра та лайăх пахалăхпа иртерес тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Вăрлăхсене чÿхесе, яровизацилесе, агротехника кăтартнă вăхăтра тата лайăх ĕçлесе акмалла. Вырăнти удобренисемпе туллин усă курмалла. Пĕтĕмпех машинăпа акмалла. Хирсене çумкурăксенчен тата сортсăр тырăсенчен тасатмалла. Çаксене пурне те обязательнăй йĕркепе кашни райсемхозрах тумалла.

СССР Совнаркомĕн «Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановленине пурнăçласа пырасси райсемхоз агрономĕсенчен те нумай килет. Вĕсем çак ĕçшĕн ответлă пулса тăраççĕ. Анчах та райсемхоз ĕçĕшĕн районри çĕрĕç пайĕн работникĕсем те, партипе совет органĕсем те ответлă пулса тăраççĕ, вĕсем райсемхозсене яланах пулăшса пыма тивĕçлĕ.

Чылай районсенче райсемхозсене сахал опытлă çамрăк руководительсем ертсе пыраççĕ. Чылайĕшĕнче агрономсем çук. Çавăнпа та районри çĕрĕç пайĕсен, чăн малтанах главнăй агрономсен райсемхозсене пулăшса пымалла, кирлĕ кăтартусене вăхăтра памалла.

Вăрлăх ĕрчетекен колхозсене кăтартуллă хуçалăхсем тăвассишĕн, пĕтĕм районри колхозсенчи вăрлăх участокĕсен тăваттăмĕш пайне акмалăх вăрлăх паракан райсемхозсем тăвассишĕн кашни районрах тимлĕн кĕрешмелле.

СССР Совнаркомĕн постановленийĕ тăрăх, пирĕн республикăра кăçал тата 10 райсемхоз тумалла. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак райсемхозсене Шăмăршă, Первомайски, Елчĕк, Тăвай, Улатăр, Кувакино, Çĕмĕрле, Элĕк, Чурачăк тата Ишлей районĕсенче организацилеме палăртрĕç.

Анчах та çак районсенчи çĕрĕç органĕсем райсемхозсем тăвасси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ-ха. Уйрăм районсенче шутласа пăхмасăрах, хăш колхоз аса килет, çавна райсемхоз тума йышăнаççĕ. Организацие хуçалăх енчен çирĕпех мар е пĕтĕм район условийĕнчен уйăрăлса тăракан колхозсене уйăраççĕ. Райсемхоз тума колхоза тĕрĕс суйласа илни сортлă вăрлăх ĕрчетес ĕçе татса парать. Çак ĕçе халех тумалла. Çуракинче сортлă вăрлăхсем акса хăварса, райсемхозсем кăçалах сортлă тырă пама пултараççĕ тата памалла та.

А. ФЕДОРОВ.
Чăваш АССР Наркомземĕн Сортоуправлени начальникĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—87, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, пар и пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00563. Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000